Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

65 (7382) № ✻ Шăмат кун, 2006 çулхи августăн (çурла) 5-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Вырма – 2006

## Пиçнĕ тырă шăппăн хире йыхравлать

Çурла уйăхĕ кунпа мар, сехетпе малалла утать, хресчене хăйĕн уттипе тан пыма чĕнет. Хире тухсан та пиçсе çитнĕ тырă пучаххисем ăна шăппăн-шăппăн калаçса вырмана йыхравланине илтетĕн. Çăкăр туса илсе çĕршыва тăрантарас ĕмĕтлĕ çĕр ĕçченĕ çакна илтсе аллине усса лараймастех.

– Хĕлле сĕтел çинчен çăкăр ан таталтăр тесен, паян ыйхăласа ларма вăхăт







çук,– çĕр хуçилле калаçать Юнкă йĕтемĕ çинче аслă машинист пулса вырма ĕçне кӳлĕннĕ Валерий Павлович Моторкин хиртен килнĕ тырăна алама-типĕтме пушаттарнă май.– Акă, ĕнер хиртен тырă килме пуçларĕ. Кĕтмен пулăм мар вăл пирĕншĕн: вырмана эпир пĕркуннерехех хатĕрленме пуçларăмăр.

Машинистпа калаçнă хушăра тырă алакансен ушкăнĕ самантлăха та алăран ĕç ямарĕ: Татьяна Москалева, Римма Коракова, Валентинапа Геннадий Егоровсем (сăн ӳкерчĕкре) йĕтем çинчи кашни ĕçех вăхăтра тума тăрăшаççĕ.

– Эпир юлхавланнине çĕнĕ çăкăр каçармасть. Çавăнпа хиртен килнĕ тырăна вăхăтра алас, типĕтес, пӳлмене хурас тесе хамăртан мĕн килнине çийĕнчех тума тăрăшатпăр. Ахальлĕн, ĕçе хăй еккипе ярсан, тăван ял-йыш умĕнче пите хĕретмелле пулса тухĕ, – йывăç кĕреçепе тырăна куçарнă çĕртех калаçать Валентина Егорова.

...Тырăпа килнĕ автомашина ăна пушатса йĕтем çинчен тухса кайса ĕлкĕреймерĕ, кунталла урпапа тулнă тепĕр машина васкани курăнчĕ. Çапла пыраççĕ сывлăш çавăрма чарăнма та вăхăт хĕсĕк вырма кунĕсем. Ку ĕç районĕпех сарăлса кайрĕ ĕнтĕ.

**Анатолий БЕЛОВ.**

Çитес суйлав ыйтăвĕсемпе

## Сирĕн ыйтусене хуравлатпăр

**– Чăваш Республикин Патшалăх Канашне депутата суйлама кандидатсем тăратасси хăш тапхăрта пулса иртет?**

– Çынсем хăйсене хăйсем кандидата сĕнеççĕ е вĕсен кандидатурисене суйлав пĕрлешĕвĕсем сĕнеççĕ пулсан та, саккунпа килĕшӳллĕн çакна сасăлав кунĕччен 80 кунран тытăнса 50 кун юличчен туса ирттермелле. Урăхла каласан, июлĕн 19-мĕшĕччен тата августăн 18-мĕшĕ хыççăн депутата суйлама кандидатсем тăратма юрамасть.

**– ЧР Тĕп суйлав комиссийĕ суйлавçăсен пĕрлешĕвĕсем тăратнă документсене миçе кун хушшинче пăхса тухать?**

– Ку срока 3 кун тесе палăртнă, анчах та, епле пулсан та, августăн 20-мĕшĕнчен кая юлмасăр документсене пăхса тухса кандидатсен списокĕн заверить тунă копийĕсене пама е ăна мĕн сăлтавпа пама килĕшменни пирки йышăну туни çинчен хыпарлама тивĕç.

**– Кандидатшăн пулнине палăртса алă пуснине пухасси хăçанччен пырать?**

– Кандидата тăратни пирки пĕлтернĕ, кандидатсен списокне заверить тунă хыççăнхи кунран тытăнса – июлĕн 20-мĕшĕнчен тытăнса августăн 18-мĕшĕнче 18 сехетчен.

Йыхрав

## Черетсĕр 12-мĕш лару

Депутатсен районти Пухăвĕн председателĕн 2006 çулхи августăн 4-мĕшĕнчи 11 № йышăнăвĕпе депутатсен районти Пухăвĕн черетсĕр 12-мĕш ларăвне 2006 çулхи августăн 9-мĕшĕнче район администрацийĕн ларусен залĕнче пухма йышăннă.

Ларура пăхса тухма кун йĕркине çак ыйтусене кĕртме сĕннĕ:

1. Муркаш район суйлав комиссийĕн йышăну сассин правиллĕ членне çирĕплетесси çинчен.

2. Депутатсен районти Пухăвĕнче депутатсен «Пĕрлĕхлĕ Раççей» ушкăнне туса хурасси çинчен.

3. Депутатсен районти Пухăвĕн 2005 çулхи ноябрĕн 24-мĕшĕнчи С-4/2 № «Муркаш районĕн 2006 çулхи бюджечĕ çинчен» йышăнăвне улшăнусем кĕртесси çинчен.

Депутатсен районти Пухăвĕн ларăвне район администрацийĕн управленийĕсемпе пайĕсен пуçлăхĕсене чĕнеççĕ.

Райадминистрацире

## Хисеп грамотине тивĕçнĕ

Районăн ял хуçалăх отрасльне аталантарма пысăк тӳпе хывнăшăн, нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн тата çуралнăранпа 50 çул çитнĕ май район администрацийĕн пуçлăхĕн июлĕн 27-мĕшĕнчи 207 № йышăнăвĕпе «Чемеево» ял хуçалăх производство кооперативĕн тĕп зоотехникне **Фаина Петровна ТИМОФЕЕВАНА** район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

Канашлу

## Çур çул итогĕсене хак пачĕç

Августăн 2-мĕшĕнче район администрацийĕн ларусен залĕнче кăçалхи пĕрремĕш çур çул итогĕсемпе анлă канашлу иртрĕ. Канашлу ĕçне район администрацийĕн ответлă ĕçченĕсем, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем, районти предприятисемпе организацисен ертӳçисем, ЧР Президент администрацийĕн йĕркелӳ ĕçĕсен управленийĕн пуçлăхĕн çумĕ С.Н. Тарасов, республика патшалăх ветеринари службин ертӳçи В.К. Тихонов хутшăнчĕç.

Пĕтĕмĕшле илсен, канашлура калаçу районăн кăçалхи пĕрремĕш çур çулти экономикăпа социаллă аталанăвĕн итогĕсем, ЧР Президенчĕ çумĕнчи районсемпе хуласен пуçлăхĕсен канашĕн ларăвĕн ĕçĕ-хĕлĕ пирки пычĕ.

Канашлăва район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов уçрĕ, хăех ертсе пычĕ. Хăйĕн сăмахĕнче, кашни отрасль иртнĕ çур çулта мĕнле аталанса пынине тишкерсе хак панă май, вăл çакна палăртрĕ. Ӳсĕмсем çук мар. Çур çул итогĕсем те çирĕплетеççĕ çавна. Пĕтĕмĕшле илсен, промышленность, ял хуçалăх предприятийĕсем унччченхинчен ӳсĕмлĕрех ĕçлесе пынă. Промышленность предприятийĕсенчен «Сеспель» предприяти, Муркаш издательство çурчĕ, Сĕнтĕрти çăкăр завочĕ, Муркашри тата Мăн Сĕнтĕрти пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕсем, ял хуçалăх предприятийĕсенчен «Свобода», Ильич яч. хис., «Восток», «Ударник», «Оринино», «Герой» хуçалăхсем ыттисемшĕн тĕслĕх пулса тăраççĕ.

Ю.А. Иванов хăйĕн сăмахĕнче çавăн пекех халăхăн йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерессИ, суту-илӳ, пурăнмалли çурт-йĕр строительстви, çул-йĕр тăвасси тата юсаса тăрасси епле шайра пулнин ыйтăвĕсене те хускатрĕ. Палăртмалла, ӳсĕмсем пур пулин те, татса памалли ыйтусем те çук мар-ха.

Кунпа пĕрлех вăл районти промышленность предприятийĕсен, ял хуçалăх предприятийĕсен тата ял тăрăхĕсен экономика ăмăртăвĕн кăçалхи пĕрремĕш çур çул итогĕсемпе те паллаштарчĕ.

ЧР Президент администрацийĕн йĕркелӳ ĕçĕсен управленийĕн пуçлăхĕн çумĕ С.Н. Тарасов ЧР Президенчĕ çумĕнчи районсемпе хуласен пуçлăхĕсен канашĕн ларăвĕн итогĕсем пирки чарăнса тăчĕ. Юлашки вăхăтра бюджет укçи-тенкипе тĕллевлĕ мар усă курнă тĕслĕхсем тĕл пулаççĕ-ха. Çитес çул валли бюджет йĕркеленĕ чух кăçалхи йăнăшсене шута илни кирлĕ.

Çавăн пекех вăл хăйĕн сăмахĕнче республика Патшалăх Канашĕн депутачĕсен çитес суйлавĕн ыйтăвĕсем çинче те чарăнчĕ, вырăнти самоуправлени органĕсен суйлав комиссийĕсене çак пĕлтерĕшлĕ мероприятие кирлĕ шайра ирттерме пур енлĕн пулăшма кирлине палăртрĕ. Вырăнти самоуправлени органĕсен республикăри спартакиадинче виççĕмĕш вырăн çĕнсе илнĕ май район администрацийĕн командине Хисеп грамоти парса чыс турĕ.

Канашлура çавăн пекех Муркаш райповĕн ертӳçи Б.В. Андреев, «Муркаш районĕнчи тĕп больница» сывлăха сыхлас ĕçĕн муниципаллă учрежденийĕн ертӳçи В.Г. Данилов тухса калаçрĕç, канашлу итогĕсене район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов пĕтĕмлетрĕ.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

Эсир ыйтнипе

## Пенси виçи каллех ӳсрĕ

РФ Пенси фончĕн Муркаш районĕнчи управленийĕ кăçалхи августăн 1-мĕшĕнчен тытăнса ĕç пенсийĕсен страхлакан пайĕн индексацийĕ пирки пĕлтерет.

**– Августăн 1-мĕшĕнчен тытăнса индексаци мĕнле майпа пулса иртет-ха?**

– Халĕ вăйра тăракан пенси законодательствипе килĕшӳллĕн ĕç пенсийĕн база тата страхлакан пайĕсене тапхăр-тапхăр индексацилеме пăхнă. Кунсăр пуçне индексацие тĕрлĕ вăхăтра тата тĕрлĕ индекссемпе туса ирттерме пултараççĕ. Кăçал апрель уйăхĕнчен тытăнса малтарахран ĕç пенсийĕсен база пайне индексациленĕ. Çапла вара 2006 çулхи август уйăхĕнчен тытăнса ĕç пенсийĕсен страхлакан пайĕ кăна 6,2 процент чухлĕ ӳсет.

Тепĕр майлă каласан, ку çакна пĕлтерет. Ватлăха пула, инвалида тухнипе тата çемьене тăрантаракана çухатнипе илекен ĕç пенсийĕсен страхлакан пайĕсен виçи 1,062 хут пысăкланать.

**– Укçа çине куçарсан, тĕрлĕ категорие лекекен пенсионерсене пенси тӳлесси мĕн чухлĕ улшăнмалла?**

– Пенси виçисем «Раççей Федерацийĕнчи ĕç пенсийĕсем çинчен» Федераллă саккунпа килĕшӳллĕн пенси илсе тăракансен ӳсеççĕ.

Çапла вара августран тытăнса ĕç пенсийĕсем республикăра вăтамран 63 тенкĕ те 87 пус ӳсеççĕ, 2302 тенкĕпе танлашаççĕ. Вăл шутран ватлăха тухнипе илекен пенсисем вăтамран 68 тенкĕ, инвалида тухнипе илекеннисен 41 тенкĕ, çемьене тăрантаракана çухатнипе илекеннисен 48 тенкĕ хăпараççĕ.

Районĕпе вăтамран уйăхсерен пенси тӳлесе тăрасси августăн 1-мĕшĕнчен тытăнса 425 пин тенкĕ чухлĕ ӳсет.

**– Пенси виçи мĕн чухлĕ ӳснине епле шутласа пĕлмелле?**

– Ăна çапла шутласа пĕлес пулать. Сăмахран, 2006 çулхи июль уйăхĕнче ватлăха пула илекен ĕç пенсийĕн виçи 2860 тенкĕ те 64 пуспа танлашнă. Çав шутран база пайĕ – 1035 тенкĕ те 9 пуспа, страхлакан пайĕ – 1825 тенкĕ те 55 пуспа.

Ĕç пенсийĕн страхлакан пайне (1825 тенкĕ те 55 пус) индексаци коэффициенчĕ çине (1,062) хутласан 1938 тенкĕ те 73 пус пулать. Пĕтĕмĕшле пенси виçине палăртма пенсин база пайĕ (1035 тенкĕ те 9 пус) çумне пенсин страхлакан пайне (1938 тенкĕ те 73 пус) хушмалла. Çапла вара августăн 1-мĕшĕнчен тытăнса пенсионерăн пенси виçи 113 тенкĕ те 18 пус хăпарать, 2973 тенкĕ те 82 пуспа танлашать.

Конкурс

## Ăстасем ăмăртĕç

Августăн 27-мĕшĕнче районти Культура çуртĕнче "Художество пултарулăхĕ урлă инвалидсен ăс-хакăлпа кăмăл-сипетне аталантарасси" социаллă проект планĕпе выставка иртет. Унта Муркашпа Элĕк районĕсенчен тĕрлĕ çулсенчи пултаруллă инвалидсем хутшăнĕç. Ăмăртăва çак енсемпе ирттерме палăртнă:

– чулран, йывăçран япаласем тăвасси, йывăç çине эрешлесе çырасси, хăваран хатĕрсем çыхасси;

– çыравçă ăсталăхĕ: сăвăсем;

– халăх искусстви: тĕрлесси, çыхасси, çĕлесси;

– живописьпе графика ăсталăхĕ.

Жюри членĕсем лайăх паллăпа хакланă ĕçсем республикăра пулса иртекен выставкăна хутшăнĕç (2006 çулхи раштав). Выставка çĕнтерӳçисем укçан премие тата диплома тивĕçĕç.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Çырăнтару – 2007

## Унччченхи хакпах çырăнма пулать

***Хисеплĕ вулакансем! Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата çитес çулхи пĕрремĕш çур çулта илсе тăма çырăнтарма пуçланă. Çитменнине августăн 31-мĕшĕччен унччченхи хакпах çырăнма май пур. Апла пулсан çăмăллăхпа усă курма, район хаçатне вăхăтра çырăнса илме тăрăшăр.***

**Райхаçат редакцийĕ.**